# И. Я. ЯКОВЛЕВ ҪӖНӖ ЧӐВАШ АЛФАВИТНЕ ТУНӐРАНПА 150 ҪУЛ, «ЧӐВАШ ХАЛӐХНЕ» ХАЛАЛА ҪЫРНӐРАНПА 100 ҪУЛ ҪИТНИНЕ ХАЛАЛЛАНӐ РЕГИОНСЕН ШАЙӖНЧИ «ҪӖНӖ ХУМ» ЛИТЕРАТУРА ПУЛТАРУЛӐХ КОНКУРСӖН ЙӖРКИ

## Пӗтӗмӗшле калани

Чӑваш Республикин культура, национальноҫсен ӗҫӗсен тата архив ӗҫӗн министерстви (малалла – Чӑваш Республикин культура министерстви), «Чӑваш наци конгресӗ» регионсен хушшинчи общество организацийӗ, (малалла – Чӑваш наци конгресӗ), Чӑваш Республикин культура, национальноҫсен ӗҫӗсен тата архив ӗҫӗн министерствин «Чӑваш Республикин наци библиотеки» Чӑваш Республикин бюджет учрежденийӗ (малалла – Чӑваш Республикин наци библиотеки), И. Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университечӗ (малалла – И. Я. Яковлев ячӗллӗ ЧППУ) И. Я. Яковлев ҫӗнӗ чӑваш алфавитне тунӑранпа 150 ҫул, «Чӑваш халӑхне» халала ҫырнӑранпа 100 ҫул ҫитнине халалланӑ регионсен шайӗнчи **«Ҫӗнӗ хум»** литература пултарулӑх конкурсне ирттереҫҫӗ. Конкурса Раҫҫей Федерацийӗн регионӗсен тата Чӑваш Республикин пӗтӗмӗшле пӗлу паракан вӗренӳ учрежденийӗсен 7–11-мӗш класӗсенче, професси вӗренӗвӗн учрежденийӗсенче (колледжсемпе техникумсенче), аслӑ шкулсенче вӗренекенсене хутшӑнма чӗнеҫҫӗ.

Конкурс **2021 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ака уйӑхӗн 1-мӗшӗччен** пырать.

## Конкурс тӗллевӗсемпе задачисем

- ҫӗнӗ чӑваш ҫырулӑхне тӑвакан аслӑ Вӗрентӳҫӗн И.Я. Яковлевӑн халӑха ҫутта кӑларнин ӑс-хакӑлӗпе пултарулӑх еткерне тишкересси тата ӑна халӑхра сарасси;
- сӑнарлӑ сӑмахпа илемлӗхе туякан пултаруллӑ шкул ачисемпе ҫамрӑксене тупса палӑртасси, вӗсене литература ӗҫне анлӑрах явӑҫтарасси;
- И. Я. Яковлевӑн «Чӑваш халӑхне» халалӗпе усӑ курса шкул ачисемпе ҫамрӑксене тӑван чӗлхе чӑваш халӑхӗн наци пурлӑхӗ пулнине ӑнланма, ӑс-хакӑлпа тирпей культурине йӗркелеме пулӑшасси;
- ачасемпе ҫамрӑксен чӗлхин пуянлӑхне ӳстерме, ытарлӑхпа сӑнарлӑх туйӑмне аталантарма учительсемпе ачасен ашшӗ-амӑшне анлӑрах явӑҫтарасси.

## Конкурс йӗркелекенсем

- Чӑваш Республикин культура министерстви;
- Чӑваш наци конгресӗ;
- Чӑваш Республикин наци библиотеки;
- И. Я. Яковлев ячӗллӗ ЧППУ.

## Конкурса хутшӑнакансем

Раҫҫей Федерацийӗн регионӗсен тата Чӑваш Республикин пӗтӗмӗшле пӗлу паракан вӗренӳ учрежденийӗсен 7–11-мӗш класӗсенче, професси вӗренӗвӗн учрежденийӗсенче (колледжсемпе техникумсенче), аслӑ шкулсенче вӗренекенсем.

## Конкурс йӗрки

Ҫамрӑк чӑваш ҫыравҫисен ирӗклӗ е сӗннӗ темӑпа литература хайлавӗсем ҫырса конкурса хутшӑнма юрать. Калав, очерк, ҫыру, интервью, эссе, сӑвӑ ҫырма сӗннӗ темӑсем:

– «И. Я. Яковлевăн «Халалне» мĕнле ăнланатăп тата йышăнатăп»;
– «Ман пурнăç тĕрекĕ»;
– «Иван Яковлев патне çыру çыратăп»;
– «И. Я. Яковлев çинчен калас сăмахăм»;
– «Çыруллă халăхăн чĕлхи çухалмасть»;
– «Иван Яковлевича «палăк» лартнă пулăттăм»;
– «Тĕрĕс калаçасси тата çырасси – пирĕн тивĕç»;
– «Иван Яковлев çутă сăнарĕ çамрăксен чĕринче упранать».

Конкурс комиссийĕ литературăн тĕрлĕ жанрĕпе **чăвашла çырнă** ал çыру хайлавĕсене йышăнать. Литература хайлавĕсенче аслă Вĕрентӳçĕн сăн-сăпачĕпе пархатарлă ĕçĕ-хĕлне кăтармалла, хăвăрăн ăшри шухăшпа кăмăл-туйăма уçса памалла. Проза хайлавĕсен калăпăшĕ 5–6 страницăран ытла, сăвăсен хисепĕ 3-рен кая пулмалла мар. Хайлавсене компьютерпа А4 форматлă шурă хут листи çине ***Alt пусмалли Times New Roman шрифтпа, 12 №-лĕ пысăкăшпа, 1,5 йĕрке хушшипе, сулахай енчен хĕррине (поля) 2,5 см, сылтăм енчен – 1,5 см*** хăварса пичетлемелле. Çамрăк авторсен литература хайлавĕсенче конкурсăн номинаци ятне, хăйсен хушаматне, ятне тата ашшĕ ятне, хăш шкулта (колледжра е аслă шкулта), миçемĕш класра (ушкăнра, курсра) вĕреннине, район (хула), республика (область, край) ятне чăвашла тата вырăсла çырмалла. Пултарулăх ăмăртăвне хатĕрлекенĕн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, кĕсье телефонĕн номерне кăтартмалла. Компьютерпа чăвашла пичетленĕ хайлавсене **2021 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 1-мĕшĕччен «Литература конкурсне»** паллăпа çак адреспа йышăнаççĕ: 428032, Чăваш Республики, Шупашкар хули, Воробьев композиторсен урамĕ, 10 çурт, Чăваш наци конгресĕ. Телефон: 62-35-61. Электрон почти: **conqress21@mail.ru**

**Конкурса ирттересси тата пĕтĕмлетесси**

Конкурс йĕркелекен комитет жюрие палăртать. Жюри пайташĕсем Чăваш Республикин паллă писателĕсемпе журналисчĕсем тата тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕсем пулаççĕ. Жюри конкурса тăратнă хайлавсене пăхса тухса хак парать, призлă вырăнсене ӳсĕм тăрăх, 7–9 тата 10–11-мĕш классенче, колледжсемпе аслă шкул вĕренекенсен йышĕнчен кашни литература тĕсĕнче уйрăм палăртать. Жюри илемпе сăнарлăх енчен паха хайлавсене уйрăм ят пама пултарать.

**11-мĕш класра вĕренекен çĕнтерӳçĕсене И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш тата вырăс филологийĕн факультечĕн чăваш уйрăмне вĕренме кĕнĕ чухне хушма балл параççĕ.**

Конкурс пĕтĕмлетĕвне протокол çырса çирĕплетеççĕ. Çĕнтерӳçĕсемпе призерсен списокне Чăваш Республикин Культура министерствин, Чăваш наци конгресĕн, Чăваш Республикин наци библиотекин сайчĕсенче вырнаçтараççĕ.

**Конкурс çĕнтерӳçисене чыслани**

Аслă Вĕрентекенĕмĕр И. Я. Яковлев çĕнĕ чăваш алфавитне тунăранпа 150 çул, «Чăваш халăхне» халала çырнăранпа 100 çул çитнине халалланă регионсен шайĕнчи **«Çĕнĕ хум»** литература пултарулăх конкурсĕн çĕнтерӳçисемпе призерĕсене дипломсемпе хаклă парнесем парса чыслаççĕ. Конкурса хутшăннисене пурне те сертификат параççĕ. Çĕнтерӳçĕсемпе призерсен ертӳçисене Тав хучĕпе хавхалантараççĕ.